«EXCELSIOR - 2013»

Çĕрпӳ районĕнчи МВУ «Михайловăкри А.А.Александров ячĕллĕ пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан тĕп шкул»

## Тема:

# МĔН ШУТЛАТĂП – ÇАВНА ÇЫРАТĂП



**Тĕпчев ĕçне пурнăçлаканĕ:**
7-мĕш класра вĕренекен
Федорова Анастасия

**Тĕпчев ĕçĕн ертӳçи:**
чăваш чĕлхипе
литературине вĕрентекен
Федорова
Ирина Николаевна

**Тĕпчев ĕçĕн тĕллевĕ:**

Кĕçĕн классенчен пуçласа паянхи кунччен çырнă сăввăмсене пĕр çĕре пуçтарса, тĕрлетсе, якатса, çĕнетсе çырса кăтартасси.

**Тĕллеве пурнăçламалли мелсем:**

1. Чăваш поэчĕсен сăввисемпе паллашасси.
2. Сăвă теорийĕпе паллашасси.
3. Сăвă çырас ăсталăха çутатса паракан тĕпчевçĕсен ĕçĕсемпе паллашасси.



**Тĕпчев объекчĕ:** тĕрлĕ çулсенче çырнă сăвăсем

**Тĕпчев материалĕ:**

1. Чăваш поэчĕсен хайлавĕсем.
2. ЧР тухса тăракан хаçат-журнал статйисем.
3. Сăвă тата калав çырас ăсталăха çутатса паракан тĕпчевçĕсен ĕçĕсем.
4. Литература терминĕсен словарĕсем



**Тăван çĕр шыв**

***Тăван çĕр шывăм – чи хитри,***
***Кашни çулах вăл çĕкленет.***
***Тăван çĕр шывăм – чи хакли,***
***Вăл пире вăй-хал кӳрет.***

***Авăн, 2008 çул***

## Çуралнă ял

Çуралнă ялăм ман илемлĕ,
Çуралнă ялăм пит чипер.
Хирте кашлать сап-сарă тулă,
Юнашарах ларать вăрман.

Çуралнă ялăм ман мухтавлă,
Çуралнă ялăм ман пуян.
Кунтах атте-анне çуралнă,
Кунта иртет ачалăхăм та ман.

Пит аслă пирĕн ял урамĕ,
Шавлаççĕ ватă йăмрасем.
Шывра ишет хур-кăвакалĕ,
Автаççĕ чăрсăр автансем.

Кăчăк туртать ав хыр вăрманĕ,
Унта çӳретĕп эп пĕрмай.
Юнашарах юхать Çавалĕ,
Тулать вăл çумăр çунă май.

Утă, 2012 çул





## Тăван кил

Тăван киле эп юрататăп,
Унта атте-анне кĕтет.
Тăван киле эп таврăнатăп,
Атте-аннене курас килет.

Чўк, 2009 çул







## Тавтапуç сана, анне

*Пăхрăм эп чӳречерен,*
*Таврăнать анне ĕçрен.*
*Ик сумкки те туп-тулли,*
*Мĕскер илнĕ-ши тутли?*
*Киви, лимон, апельсин,*
*Панулмипе мандарин –*
*Пурте, пурте пин валли,*
*Уявра сăйланмалли.*
*Тавтапуç сана, анне,*
*Манмăп сана ĕмĕрне.*

*Ака, 2008 çул*











## *Анне валли – çĕр çырли*

***Канмалли кун – ирхине***
***Çитрĕм вăрман хĕррине.***
***Йĕри-тавра çĕр çырли:***
***Кĕренни те хĕп-хĕрли.***

***Татсах татрăм çырлине,***
***Тултарайрăм витрине.***
***Чуптарам-ха килелле –***
***Савăнтарам аннене.***

***Çуралнă кун ячĕпе***
***Эп саламлăп аннене.***
***Çут çанталăк парнине***
***Эп тыттарăп аллине.***

***Анне çийĕ çĕр çырли,***
***Йăл-йăл çиçĕ ун кулли.***
***Маншăн вара чи хакли –***
***Çĕр çинче анне пурри!***

***Чӳк, 2012 çул***



## Дежурнăй

*Телефон ав шăнкăртатрĕ,*
*Вырăн çинчен тăмалла,*
*Паян шкула иртерех*
*Манăн çитсе лармалла.*
*Шăнкăрав сас париччен*
*Доскана тасатмалла,*
*Пÿлĕме уçăлтарма та*
*Манăн вăхăт тупмалла.*

*Авăн, 2009 çул*






## Пиллĕкмĕшсем

Акă пирĕн ачасем,
Пĕчĕкренех маттурсем,
Пурте пиллĕкмĕш классем,
Тăрăшса вĕренекенсем:
Пĕрремĕшĕ – Андрей,
Иккĕмĕшĕ те – Андрей,
Виççĕмĕшĕ – Алексей,
Тăваттăмĕшĕ – Настя,
Пиллĕкмĕшĕ – Оля,
Улттăмĕш – Наташа,
Çиччĕмĕшĕ – Саша,
Саккăрмĕшĕ - Дима.
Пурте, пурте паттăрсем,
Пурте хастар ачасем.



Авăн, 2010 çул



## Çуркунне

**Çитрĕ ырă çуркунне,**
**Кайăксем юрлаççĕ.**
**Сарă хĕвел ăшшинче**
**Ачасем выляççĕ.**

**Шăнкăрчсем те вĕçсе килчĕç,**
**Йышăнчĕç вĕллисене.**
**Çепĕççĕн шăрантараççĕ**
**Хăйсен савăк юррине.**

**Ака, 2008 çул**







## Кĕркунне

Килсе ҫитрĕ кĕркунне
Ылтăн тĕспе ялкăшса.
Савăнтарчĕ вăл пире
Шкула кайма йыхăрса.

Пахча ҫимĕҫ йăтăнать,
Витри-витрипех тулать.
Уплюнкки те вăрманта
Карти-картипех ларать.

Анчах ки-как хур кайăк
Хурлантарать сассипе.
Кайри – малта, малти – кайра
Вĕҫет кăнтăр еннелле.

Сар хĕвелĕ пытанать
Тĕксĕм пĕлĕт хыҫнелле,
Вăйлă ҫил те лăпланать
Каҫ пулса ҫитнĕ тĕле.

Авăн, 2012 ҫул



## Кĕрхи палан

*Кăçал ылтăн  кĕркунне*
*Çĕклет пурин кăмăлне.*
*Сар хĕвелĕ ăшшине*
*Ярать кашнин çинелле.*
*Улмуççийĕ улмине*
*Тăсать ман ал еннелле.*
*Пахчари паланĕ те*
*Хĕп-хĕрлĕ шерепере.*
*Çĕклеймиех йывăр-çке*
*Пĕчĕк çеç тураттисем.*
*Хушпу шăрçи евĕр-çке*
*Унăн йышлă çырлисем.*
*Пуç çĕкленĕ-çĕклемен*
*Эп пăхап чÿречерен.*
*Хĕрлĕ палана курсан*
*Чунăм савăнать-çке ман.*

*Авăн, 2011 çу*







## Тилĕ

*Акă пырать çулпала*
*Чее тилĕ васкаса.*
*Ял хĕрнелле çитеспе*
*Пăхать кăн-кан! тавралла.*
*Хăй чĕтрет, шикленкелет,*
*Хырăм выççи пĕтерет.*
*Кашни каçах çак ялтан*
*Пĕрер чăх вăл сĕтĕрет.*
*Тиллĕн те кĕçех шалчи*
*Тулĕ ак ярса тытсан.*
*Анчах шалчи туличчен*
*Чупать çавах ялалла.*
*Тусăм, эс те шухăшла:*
*Çын пурлăхне тытиччен*
*Ларса лайăх шухăшла,*
*Картса хур çакна, ăсла.*
*Вăрлани вăл нихçан та*
*Ырри патне çитермест.*

Юпа, 2012 çул

# *Пĕтĕмлетӳ*



тăван ял



Тăван çĕр шыв






çуралнă кил



атте-анне

Çак ĕçре эпĕ тĕрлĕ çулсенче çырнă сăввăмсене çулсем тăрăх мар, пачах та урăх принципа шута илсе вырнаçтартăм. Ман шутпа, çакă çутă тĕнчере Тăван çĕр шывран, тăван ялтан, çуралса ӳснĕ килтен, хаклăран та хаклă атте-аннерен пахи нимĕн те çук пулĕ. Эпĕ вара – Тăван çĕр шывăн, тăван ялăн, çуралнă килĕн, атте-аннен уйрăлми пĕчĕк пайĕ. Çавăнпа та вĕсем çинчен çырнă сăввăмсене чи малтан вырнаçтарас терĕм.

Анне хăйĕн тĕпренчĕкне пуçласа шкула çавăтса каять, çут çанталăк илемĕпе те вăлах чи малтан паллаштарать.Ун çинчен те çырмасăр тăма май çук.

Сăвăмсен йышĕ нумаях мар, анчах та тумламранах кӳлĕ пулать.


Пысăк тав, сире.
Сывă пулăр!